# Аслă Çĕнтерӳпе саламлатпăр!

Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

32 (8098) № ✻ Юн кун, 2013 çулхи çу (май) уйăхĕн 8-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Раççейре

## Японипе çыхăнусем йĕркеленеççĕ

Апрелĕн 30-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра Японипе Раççейăн «Анлăрах çыхăнса ĕçлемелли майсене шырасси» форумне хутшăннă.

Форум ĕçне Японин премьер-министрĕ Синдзо Абэ, Раççей Правительствин председателĕн пĕрремĕш çумĕ Игорь Шувалов, Японипе Раççейăн ĕç ушкăнĕсен представителĕсем хутшăннă.

Хăйсен сăмахĕсенче Синдзо Абэ тата Игорь Шувалов Раççейпе Япони хушшинчи экономика хутшăнăвĕсен çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнине, çирĕп çыхăнусем йĕркелени икĕ еншĕн те усăллă пулнине палăртнă. Форумра Раççейре ял хуçалăхĕнче тата апат-çимĕç промышленноçĕнче, экологи хула строительствинче, онкологи чирĕсене диагностика тăвассинче тата сиплессинче Японин малта пыракан технологи мелĕсемпе анлăрах усă курассин малашлăхĕ пирки сăмах пынă.

Форум хыççăн Япони посольствинче Михаил Игнатьев Японин премьер-министрĕпе Синдзо Абэпе тĕл пулса калаçнă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Япони инвестицийĕсемпе тата технологийĕсемпе интересленни пирки пĕлтернĕ. Пĕрле çыхăнса ĕçлемелли объектсенчен пĕри Çĕнĕ Шупашкарта тăвакан йăла каяшĕсен полигонĕ пулса тăма пултарĕ.



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Петр Чижов – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин Хорнуй ял тăрăхĕнче паян пурăнакан виçĕ участникĕнчен пĕри. Хорнуйĕнчи Петр Даниловичăн вăрçă тути-масине 1943 çулта ас тивме лекнĕ. Çав çул ăна Мăн Сĕнтĕртен тӳрех фронта ăсатнă.*

*Вăрçă ветеранĕн çар службин 1950 çулччен тăсăлнă. Япони самурайĕсемпе пынă çапăçусене те хутшăнма тивнĕ унăн, Корейăра та пулнă. Çар ретĕнчен таврăнсан та алă усса ларман ветеран, вăрçăпа юхăннă халăх хуçалăхне ура çине çĕклессишĕн ырми-канми тăрăшнă.*

В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Майăн 9-мĕшĕ – Çĕнтерӳ кунĕ

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ!**

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин хаклă ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсем!

Сире Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе пĕтĕм чунтан саламлатăп!

Çак уяв пирĕншĕн пуриншĕн те уйрăмах çывăх. Вăл халăх пĕрлĕхне, хăюлăхпа паттăрлăха тата Тăван çĕр-шыва чунтан юратнине сăнарлакан çутăран та çутă символ пулса тăрать. Фашистла Германие çĕнтерессине çывхартас ĕçе миллионшар çын хăй вăйĕ çитнĕ таран тӳпе хывнă, вĕсенчен нумайăшĕ çĕр-шывăмăрăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварассишĕн пурнăçне панă.

Чăваш Ен çыннисем Тăван çĕр-шывăн мĕн пур фронтра паттăррăн хӳтĕленĕ, тылра вăйран кайса ĕçленĕ – ачисемпе мăнукĕсен пуласлăхĕшĕн паттăрлăх кăтартнă. Пирĕн хӳхĕм çĕрĕн 208 пин ытла харсăр ывăлĕпе хĕрĕ фронта тухса кайнă. Çĕнтерĕве çĕнсе илме пĕрре те çăмăл пулман – çапăçу хирĕнчен пурте каялла таврăнайман. Вăрçă хыççăн Чăваш Республики арканнă хуласемпе ялсене юсаса çĕклеме пĕтĕм çĕр-шывпа пĕрле хастаррăн хутшăннă. Пирĕн атте-анне, асатте-асанне, кукаçи-кукамай килес ăрусем телейлĕ пурăнччăр тесе экономикăна кĕске вăхăтра ура çине тăратнă.

Кашни çулах Майăн 9-мĕшĕнче эпир çĕр-шывăмăршăн питех те йывăр килнĕ çулсене тивĕçлипе тӳссе ирттерне тата пире Çĕнтерӳ парнеленĕ паттăрсене чыслатпăр. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин хаклă ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсем! Паттăрлăхăрпа хăюлăхăршăн пурсăра та çĕре çити тайма пуç! Эсир – халăхăн тĕп хăвачĕ!

Сире вăрăм ĕмĕрлĕ кун-çул, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм, ырлăхпа телей сунатăп!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

**АСЛĂ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ, САЛТАК АРĂМĔСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ВĂРÇĂ АЧИСЕМ, ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 68 çул çитнĕ ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп.

Эсир хаяр та хăрушă вăрçăра тăшмана çапса аркатрăр. Хăвăрăн пурнăçăра шеллемесĕр, Тăван çĕр-шывăмăрăн ирĕклĕхĕпе чысне, никама пăхăнманлăхне сыхласа хăвартăр. Ытти çĕр-шыв çыннисемпе пĕрле Европăри нумай халăха фашизмăн пусмăрĕнчен хăтартăр, çĕр çине мирлĕ пурнăç илсе килтĕр. Çĕре çити пуç таятпăр эпир паян сирĕн умăрта çакăншăн, пире мирлĕ пурнăç парнеленĕшĕн.

Тылра та ватти-вĕтти кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕ, тăшмана çапса аркатма, Çĕнтерĕве çывхартма пулăшрĕ. Паян районта 942 тыл ĕçченĕ пурăнать. Ĕç ветеранĕсем пурĕ 5157-ĕн. Чĕререн тухакан тав сăмахĕсене йышăнсамăр пирĕнтен маттур та хастар ĕçшĕн.

Вăрçă кашни çемьере, кашни çынра хăйĕн хура йĕрне хăварчĕ. Пирĕн районтан кăна çак хăрушă вăрçа 9845 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 5491-шĕ каялла таврăнайман. Шел пулин те, сайралсах пырать вăрçă ветеранĕсен речĕ. Паян районта 65 вăрçă ветеранĕ, вăрçăра вилнĕ салтаксен мăшăрĕсем 5-ĕн, блокадăри Ленинградра пулнисем 2-ĕн пурăнаççĕ. Тăван çĕр-шывшăн пуçне хунă салтаксем ĕмĕр-ĕмĕр пирĕн чĕрере. Вĕсен умĕнче, Çĕнтерӳпе таврăннă салтаксемпе тыл ĕçченĕсен умĕнче эпир çĕре çити пуç таятпăр. Тавах сире Аслă Çĕнтерӳпе паянхи телейлĕ пурнăçшăн.

Çĕр çинче урăх нихăçан та вăрçă ан пултăр. Çавăнпа та хамăртан килнине йăлтах тумалла пирĕн. Тăван район, республика, çĕр-шыв аталанăвĕшĕн кунран-кун çитĕнӳллĕрех вăй хумалла. Çамрăк ăрăва мĕн пĕчĕкрен сирĕн пек паттăр та хăюллă, вăйлă та чăтăмлă пулма вĕрентмелле. Сире курса пирĕн ачасемпе мăнуксем те Тăван çĕр-шыва юратма, унăн пуласлăхĕшĕн яваплăха туйса ӳсчĕр.

Хаклă çыннăмăрсем! Сире çирĕп сывлăх сунатăп. Кунçулăр телейлĕ те вăрăм пултăр, ватлăхăр канлĕ килтĕр, çумра ялан сирĕн çывăх çыннăрсем пулччăр. Тата нумай-нумай çул пурăнăр. Тавах сире тепĕр хут сирĕн паттăрлăхăршăн.

**Р. ТИМОФЕЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

## Тĕп ыйту – çур аки ĕçĕсем

Видеоконференци

Майăн 6-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен администрациу пуçлăхĕсемпе видеоконференци ирттернĕ. Çурхи ака-суха ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлесси пирки сăмах пынă видеоконференцире.

«Иртнĕ кунсенче пулнă çумăрсем çурхи ĕçсене кăштах чăрмав кӳчĕç. Анчах та агротехника енĕпе ку лайăх çеç. Малараах акма ĕлкĕрнисемшĕн çакă усса кайĕ кăна», – палăртнă тĕл пулăва уçнă май Михаил Васильевич.

ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов пĕлтернĕ тăрăх майăн 6-мĕшĕ тĕлне çурхи пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене пĕтĕм лаптăкăн 47,1 процентчĕ чухлĕ акса хăварма ĕлкĕрнĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан ку вăл чылай аванрах. Апла пулин те лапланма сăлтав çук. Кăçал тыр-пула çĕр улмин, ытти культурăсен лаптăкĕсем 2012 çулхинчен чылай пысăкрах. Ĕç калăпăшĕ ӳсет.

Ытти çулсенчи пекех Патăрьел, Елчĕк, Комсомольски районĕсенче акана чи малтан тухнă, пĕтĕм лаптăкăн 70 процентне акса хăварнă. Çав вăхăтрах кăнтăр енчи Улатăр районĕнче акнă лаптăксем пĕтĕмпе те 20 процент кăна. Çĕмĕрле, Шупашкар районĕсем те ака планĕсене 13 процент кăна пурнăçланă. Канаш районĕнчи икĕ хуçалăхра хире тухман та. Вăрлăх, техника, çунтармалли-сĕрмелли материалсем çитменнипе сăлтавлаççĕ. М. Игнатьев кун пек предприятисен çĕрĕсене яваплăрах хуçасене çирĕплетсе пама сĕннĕ, министра йышăннă мерăсем пирки тепĕр эрнерен пĕлтерме хушнă.

## Район уй-хирĕсенче

**Районти çĕр ĕçченĕ çу уйăхĕн кашни уяр кунĕпе туллин усă курассишĕн тăрăшать. Техника тĕрĕслевĕ витĕр тухнă тракторсем иртен пуçласа каçченех хирте тăрăшаççĕ.**

**Çĕр ĕçченĕн кăçалхи çур акире уй-хир ĕçĕсен планĕпе килĕшӳллĕн пурĕ 10737 гектар çуртрисем акса хăвармалла. Ĕнерхи кун тĕлне тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем хатĕр уй-хирсене пурĕ 3170 гектар (29 процент) акса хăварма ĕлкĕрнĕ.**

**«Восток», «Герой» хуçалăхсем пĕр çул ӳсекен курăксене 43 гектар акнă. «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество 15 гектар (15 процент) çĕр улми лартнă.**

## Районти уяв программинчен

Тăван çĕр-шывăн 1941 – 1945 çулсенчи Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 68 çул çитнине халалланă районти уяв митингĕ Муркашра майăн 9-мĕшĕнче иртет, 10 сехетре пуçланать. Унччен «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнче вăрçă çулĕсенчи юрăсем янăраççĕ, картингистсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ.

Чăваш Республикин çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пайĕн пуçлăхĕ А. Кочуров парад тăратать. Çамрăк армеецсем Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин патшалăх ялавĕсене илсе тухаççĕ.

Савăнăçлă лару-тăрура уяв митингне район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев уçать. Хыççăнах Аслă Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе СССР спорт мастăрне Владимир Салтыкова асăнса велосипедистсем старта тухаççĕ. Уява хутшăнакансем, хăнасем пуханнисене Аслă Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе саламлаççĕ.

11 сехет иртсен вăрçă çулĕсене халалласа Муркаш шкулĕнче вĕренекенсем литмонтаж кăтартаççĕ. Муркаш шкулĕнчи кадетсен плац-парачĕ, районти çарпа патриотика клубĕсен çамрăк армеецĕсен уйрăмĕсен парачĕ пулать. Кайран Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче вилнисене халалласа лартнă палăк умне чечексем хураççĕ.

12 – 13 сехетсенче Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи культурăпа кану центрĕн ветерансен хорĕн концерт программине паллашма май пулĕ.

Уявăн каçхи программи 20 сехетре пуçланать. Ăна ачасен Муркашри искусство шкулĕн воспитанникĕсем уçаççĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев тата Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Ермолаев салам сăмахĕсем калаççĕ.

Çĕнтерӳ кунне халалласа «Эпĕ ас тăватăп! Эпĕ хăпартланатăп!» ятпа ирттернĕ пĕрремĕш район фестивалĕн çĕнтерӳçисене чыслаççĕ. Хыççăн асăннă фестиваль çĕнтерӳçисен концерчĕ пулать.

Кайран çамрăксен «Пурне те ятран аса илер» акцийĕ иртет. Хыççăн концерт программи малалла тăсăлĕ.

Çĕнтерӳ салючĕ 22 сехет те 30 минутра пулать. Уяв каçĕ «Эпĕ ас тăватăп! Эпĕ хăпартланатăп!» концерт программипе вĕçленĕ.

Аслă Çĕнтерӳ кунне халалланă уяв мероприятийĕсем майăн 8 – 9-мĕшĕсенче мĕн пур ял тăрăхĕсен территорийĕсенче, ĕç коллективĕсенче те иртеççĕ.

Асăрхаттару

## Вăрмансене кĕме чарнă

Чăваш Республикин çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх Мари Республикин территорийĕнче апрелĕн 29-мĕшĕнчен тытăнса майăн 13-мĕшĕччен пушар хăрушсăрлăхĕн уйрăм режимне çирĕплетнĕ. Майăн 1 – 12-мĕшĕсенче вара вăрмансене ирĕклĕн çӳрессине чикĕленĕ.

Аса илтеретпĕр, майăн 1-мĕшĕнчен тытăнса 12-мĕшĕччен Чăваш Ен тĕп хулин территорине кĕрекен Атăл леш енчи вăрмансене çӳрессине чикĕленĕ. Кун пирки йышăнăва апрелĕн 30-мĕшĕнче Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков алă пуснă. Çакă вăрмансенче пушар тухас хăрушлăхпа çыхăннă.

Çырăнтару – 2013

## Çырăнмасăр ан юлăр

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Апрелĕн 1-мĕшĕнчен хаçата ултă уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.**

**Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулар!**

Пĕчĕк бизнес аталанăвĕ

# «Космос» сире куллен хапăл тăвать




Пурнăç пĕр вырăнта тăмасăр шав малалла аталанать. Çавна май кун йĕркинче тăтăшах çĕнĕлĕхсем вăй илеççĕ. Вĕсем пурте – халăхăмăр пурнăçне ырă еннелле улăштарма çул уçаканнисем. Çакна валли Раççей Федерацийĕпе тата Чăваш Республики шайĕнчен те пулăшусем сахал мар. Вĕсемпе вăхăтра усă куракан предпринимательсем пĕчĕк тата вăтам бизнеса аталану çулĕпе малалла илсе пыраççĕ те. Хăйсем аталаннипе уттисене те çул уçса параççĕ.



Пытармăпăр, район экономикин аталанăвĕнче пĕчĕк тата вăтам предпринимательство палăрмăлă вырăн йышăнать. Уйрăмах хушма ĕç вырăнĕсем туса парассипе. Çакăнта рынок экономикинчи йывăрлăхсене çĕнсе, пурнăç кăларса тăратнă çĕнĕлĕхсене алла илсе ĕçлеме тăрăшакан çамрăксем кулленех шыравра пулнине уйрăммăн палăртассăм килет. Вĕсем рынок хутшăнăвĕсенчи çивĕч конкуренцие хирĕç тăма пултарни, çĕнĕлĕхсене алла илсе аталанни – паянхи çамрăксен сăнсăпачĕ.



Çак шухăшсемпе эпĕ иртнĕ эрнере Мăн Сĕнтĕрте уçăлнă «Космос» сĕтел-пукан магазинĕ умне çитсе тăтăм. Унăн хуçи – çак салара пурăнакан уйрăм предприниматель Алексей Кузнецов.

Магазина савăнăçлă лару-тăрура уçнă çĕре район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Лаптев, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В. Кожанов хутшăнчĕç.

– Районта пĕчĕк хуçалăх формисене аталантарасси тĕллевлĕ пулса пырать. Экономикăри йывăрлăхсене пăхмасăрах район территорийĕнче уйрăм предпринимательсен хастарлăхĕпе суту-илӳпе обществăлла апатлану предприятийĕсем уçăлаççĕ. Вĕсем халăх валли вуншар хушма ĕç вырăнĕ туса параççĕ. Тавах вĕсене район пурнăçĕнче активлă вырăн йышăннишĕн тата пирĕнпе çума-çумăн пулнишĕн, – терĕ Ростислав Николаевич магазин умне пухăннă çынсем умĕнче А. Кузнецова тав тунă май. Хăйĕн сăмахĕнче вăл предпринимательство аталанăвĕ районта тăтăш шыравра пулнине тĕслĕхсемпе палăртрĕ.

– Нумай тар юхтартăр, анчах тăрăшни сая каймарĕ. Сĕтел-пуканпа суту-илӳ тăвакан «Космос» магазин малашне Мăн Сĕнтĕрĕн илемлĕ вырăнĕсенчен пĕри пуласси пирки иккĕленместĕп, – хутшăнчĕ калаçăва ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Анатолий Владимирович.

Çĕнĕ магазина пĕрремĕш кунах çынсем чылаййăн пухăнчĕç. Апла пулсан кĕтнĕ вĕсем «Космос» уçăласса. Тĕрлĕ сĕтел-пукан ассортиментĕ вĕсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси пирки кунта пĕр иккĕленӳ те çук.

Пĕчĕк бизнес аталанăвĕнче сĕтел-пукан сутассипе хăтлă та пысăк магазин уçăлни Муркаш районĕ хăйĕн аталанăвĕнче тепĕр утăм малалла тунине çирĕплетрĕ тесе шутлатăп. Виçĕ çул кĕтрĕç Мăн Сĕнтĕрсемпе Муркашсем ăна. Тинех кĕтни пурнăçа кĕчĕ. Ял çынни малашне инçе çула каймасăрах хăйне тĕспе те, калăпăшпа та, хакпа та тивĕçтерекен сĕтел-пукана Мăн Сĕнтĕрти «Космос» магазинрах туянма пултарĕ. Тавар туянакана ăна килех çитерсе парасси те Кузнецовсем пуçăннă ĕç-хĕлĕн сервисĕнче. Районта пурăнакансем çывăх вăхăтрах «Космос» магазина çитсе курасса, унпа паллашса кирлĕ тавар туянасса кашниех шанатпăр. Кунта çакна хушса каламалла, магазин уçăлнă кун таварсен пĕр пайĕ хăйĕн хуçисене тупрĕ те ĕнтĕ.

– Муркаш ен пуçаруллă çынсем пулнипе республикăра яланах ырă ятлă. Ку вăл пире савăнтарать. Вĕсен тăрăшулăхĕпех районта пĕчĕк тата вăтам предпринимательство сумлă çул уçса пырать. Ку вăл – экономика тĕлĕшĕнчен çирĕп аталаннă малашлăх никĕсĕ, – терĕ «Космос» магазина официаллă лару-тăрура уçса хĕрлĕ хăю татнă май депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В. Кожанов.

– Кашни ялтах пурнăç вĕресе тăмалла. Ял çыннин хула çыннисенчен нимĕнпе те катăк пулмалла мар. Ялсенчи çĕнĕрен çĕкленекен кил-çуртсене хăт кĕртме вара ятарлă сĕтел-пукан кирлĕ. Ку ыйтупа Муркашсемпе Мăн Сĕнтĕрсен ыйтăвĕсене вырăнтах тивĕçтересси – пирĕн ĕç тĕллевĕ. Манăн шухăш çапла. Ăна пурнăçа кĕртессипе юлашки çулсенче мăшăрăмпа пĕрле çĕрне-кунне пăхмасăр тимлерĕмĕр, – калаçа парать уçăлнă магазинри хăтлă та илемлĕ сĕтел-пукан хушшипе иртнĕ май Алексей Алексеевич.

Унăн амăшĕ – ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче 80 çул тултарнă Мария Алексеевна – ывăлĕ 16 çултах предпринимательство ĕçне кӳлĕннине тата çак ĕçре малтанхи вăхăтра Мускавран банан турттарса килсе сутнине, Ирина мăшăрĕ те упăшкипе пĕр урапа çинче пулнине савăнăç куççулĕ витĕр палăртрĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: магазинти илемлĕ диван пĕрремĕш куннех хăйĕн хуçине тупрĕ. Унăн хăтлăхĕ кил-çурта илем кӳресси пирки иккĕленӳ çук; сĕтел-пуканпа сутă тăвакан «Космос» магазин хуçи А. Кузнецов, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Лаптев, район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла).**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Мăнкун ячĕпе – саламлă сăмахсем

**ХРИСТОС ЧĔРĔЛНĔ!**

Сире, Муркаш районĕн çыннисене, пурсăра та çак чи савăнăçлă праçник ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Христос вилĕмрен чĕрĕлсе тăрса пирĕн ĕмĕрхи вилĕме пĕтерчĕ, тамăк вăйне пĕтерчĕ. Христос вилĕмрен чĕрĕлсе тăчĕ те пире те вилĕмрен чĕрĕлме пачĕ, пире çĕтмах алăкне уçса пачĕ. Христос вилĕмрен чĕрĕлсе тăчĕ те пире çĕр çинчен пĕлĕт çине кусма çул пачĕ, ĕмĕрлĕх савăнăç килчĕ.

Çавăн пек таса Мăнкун пĕрре анчах, çак кун – праçниксенĕн праçникĕ, савăнăçсен савăнăçĕ. Эй, тăвансем, вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă Христос Турра мухтаса юрлар, Çĕлакан Турăшăн савăнса тăрар.

Мăнкун праçникĕ 40 куна тăсăлать. Çав кунсенче эпир пĕр-пĕрне ырă сунса: «Христос чĕрĕлнĕ!» – тесе саламлатпăр. Саламлакана хирĕç: «Чăн чĕрĕлнĕ!» – тетпĕр.

Мăнкун эрнинче чиркӳре ытти кунсенчен уйрăм аван, илемлĕ кĕлĕсем пулаççĕ. Çав эрнере кашни кунах чиркӳ йĕри-тавра турăшсем, чиркӳ ялавĕсем йăтса çавранаççĕ (крестный ход). Чиркӳре патша алăкĕ эрнипех уçă тăрать.

Сире пурсăра та сывлăх, килĕшӳ, юрату сунатăп. Чĕрĕлсе тăнă Христос Хăвачĕ Сирĕнпе яланах пултăр.

Христос чĕрĕлнĕ! – Чăн чĕрĕлнĕ!

**Йӳçкассинчи чиркӳ настоятелĕ Сергий атте.**

Хаçатра çырнă хыççăн

# Пусăсене юшкăнран тасатнă

Район хаçачĕн апрелĕн 20-мĕшĕнчи номерĕнче «Сăн ӳкерчĕк айăплать» рубрикăпа «Муркашра тапать «çăл куç» корреспонденци пичетленнĕччĕ. Сăмах унта Муркашри сĕт завочĕпе юнашарах вырнаçнă тимĕрбетон пусăсем юшкăнпа тулса ларни, таса мар шыв çиеле тухса çырмана юхни пирки пырать.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Никитин пĕлтернĕ тăрăх асăннă пусăсене тасатнă, кунтан халĕ таса мар шыв тасатмалли сооружение йĕркеллĕ кайса тăрать.

Çавна та каласа хăвармалла. Кунти пусă урлă таса мар шыв Чапаев урамĕнчи нумай хваттерлĕ 59-мĕш çуртран тата Муркаш райповĕн «Бриз» каферен каять. Пусăсем юшкăнпа тулса ларни канализаци пăрăхĕсен тайлăкĕ пĕчĕккрех пулнине çыхăннă. Çавăнпа çитес вăхăтра канализаци системине çĕнетес ыйту тăрать.

Спорт

# Шупашкарта та, Элĕкре те палăрнă

Апрелĕн 27-мĕшĕнче Шупашкарти «Олимпийский» стадионта хăвăрт утассипе Чăваш Республикин кубокĕн иккĕмĕш тапхăрĕ иртрĕ. Унта пирĕн районти В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕнче вăй хуракан В. Киселев тата С. Васильев тренерсен воспитанникĕсем те хутшăннă, вĕсенчен виççĕшĕ медальсем çĕнсе илнĕ. 3 çухрăмлă дистанцире Стас Николаев (Çатракассинчи уйрăм) ылтăн медале тивĕçнĕ, çакăн пек дистанцирех Роман Куликовпа Сергей Белов (Муркашри уйрăм) хăйсен ӳсĕмĕнче иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăнсене тухма пултарнă.

Майăн 3-мĕшĕнче Элĕк салинче пысăк ăмăрту иртнĕ. Хăвăрт утассин юхăмĕ 60 çул тултарнине тата Чăваш Республикин физкультура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ В. Семенов 80 çул тултарнине халалланă ăмăртăва 200 ытла хăвăрт утакан хутшăннă. Вĕсен йышĕнче – пирĕн районти çамрăк спортсменсем те.

Çӳлерех асăннă тренерсен хавхалантарăвĕпе Муркашсем лайăх кăтартусемпе тавраннă. Хăйсен ӳсĕмĕнче тупăшса Сергей Белов (ăмăртăвăн тепĕр тупăшăвĕнче 2-мĕш вырăн та çĕнсе илнĕ) тата Роман Куликов 1-мĕш вырăнсене тивĕçнĕ. Стас Николаев, Лилия Степанова 2-мĕш вырăнсем çĕнсе илнĕ, Анжела Федорова 3-мĕш вырăна тухма пултарнă.

Конкурс

# Район юбилейне халалланă

Районта 2013 çулхи апрелĕн 22-мĕшĕнчен тытăнса декабрĕн 30-мĕшĕччен сăн ӳкерчĕксен «Тăван тавралăхран лайăххи çук» конкурсне ирттерме палăртнă. Ăна районăн 70 çулхи юбилейне халалланă. Конкурс тĕллевĕ – шкулсенче вĕренекенсен тата районта пурăнакансен граждан, общество тата пултарулăх активлăхне ӳстересси, пĕчĕк Тăван çĕр-шыва юратассине, ялта ĕçлесе пурăнассин, патриотизм туйăмне аталантарассин, сăн ӳкерессин искусствине халăх хушшинче сарасси.

Конкурса районта пурăнакан кирек кам та хутшăнма пултарать. Çын миçе çулта пулни, ăçта пурăнни, ĕçлени пĕлтерĕшлĕ мар. Çак ӳкерчĕксен конкурсне çак номинацисенче ирттерĕççĕ:

– «Кивĕ сăн ӳкерчĕк мĕн çинчен каласа парать?»;
– «Çăкăртан асли çук»;
– «Хамăн тăван кĕтесе юрататăп»;
– «Манăн мăнаçлăх»;
– «Сăн ӳкерчĕк-прикол».

Конкурс ĕçĕсене район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайне 2013 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕччен тăратмалла.

Конкурс условийĕсем пирки тĕплĕнрех район администрацийĕн сайтĕнче паллашма пултаратăр.

Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа – 68 çул

# Фестиваль иртрĕ

Апрелĕн 30-мĕшĕнче Муркашри Культура çуртĕнче пысăк йыш пухăнчĕ. Кунта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 68 çул çитнине халалласа район шайĕнчи «Эпĕ ас тăватăп! Эпĕ хăпартланатăп!» ятпа пĕрремĕш фестиваль пулчĕ.

Фестиваль район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕ, Муркаш районĕнчи ял тăрăхĕсем хушшинчи культура центрĕ МБУК, ветерансен канашĕ, «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕ, район администрацийĕ çумĕнчи çамрăксен ертӳлĕхĕ йĕркеленипе иртрĕ. Ырă пуçару Тăван çĕр-шыв историне, паттăрлăхне упрассинче, патриотла юрра-кĕвве пропагандăлассинче, пултарулăх ушкăнĕсене куракан умне ытларах кăларассинче пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Фестиваль тĕрлĕ номинаципе иртрĕ. Программăри кашни сăвă, юрă, ташă Аслă Çĕнтерӳпе, Тăван çĕр-шывпа – иртнĕ кунпа çыхăннă. Çапла вара 300 ытла юрă-кĕвĕ ăсти сцена çине тухса пултарулăхпа паллаштарчĕ. Кунта ача сачĕ çулĕнчисемпе тивĕçлĕ канăва тухнисем те пулчĕç. Фестивальте уйрăмах палăрнисене майăн 9-мĕшĕнче иртекен гала-концертра курăпăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Пирĕн пата çыраççĕ

# Хавас юрри – пире валли

2013 çул Тавралăха хӳтĕлемелли çултапăк пулнине «Березка» ача садĕнчи воспитательсемпе унта çӳрекенсем яланах асра тытаççĕ. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ садикри «Пулăсем» ушкăн çурхи кунсем çитсен шăнкăрч вĕллисем туса çакасси çине пысăк тимлĕх уйăрать.

Ачасем тăрăшнипе тата вĕсен ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе кăçал та шăнкăрчсем валли вĕллесем хатĕрлерĕмĕр, вĕсене паркри йывăççем çине çакса тухрăмăр. Халĕ вара ачасем кайăксем çунат çапса юрласа хăйсене тав тунине пăхса савăнаççĕ.

Ача сачĕн воспитателĕсем, «Пулăсем» ушкăн членĕсем пĕрле килĕштерсе ĕçленĕшĕн ашшĕ-амăшĕсене тав сăмахĕ калаççĕ.

**Л. ФЕДОРОВА.**

# Чăваш халăх ывăлĕ

**И.Я. Яковлев çуралнăранпа 165 çул çитнине халалласа**

Чăвашра çуралнă ывăл
Кушкă ялĕнче.
Ячĕ халĕ асра унăн,
Чапĕ – тĕнчипе.

Ăслă çын пулма пилленĕ,
Тӳснĕ нушине.
Кĕнеке вăл парнеленĕ
Чăваш ачине.

– Вырăспа телей туптанĕ, –
Шаннă ĕненсе.
Алфавит çырса хăварнă
Çутлăх пиллесе.

Халь тĕнче пĕлет ăсчахăн
Сумлă ĕç(ĕ)сене.
Яковлев сутта кăларнă
Чăваш халăхне.

**С. ФЕДОРОВА.**

Çатракассинчи вăтам шкул.

# В. ИВАНОВ: «Шкулти тӳлевсĕр вĕренĕве саккун шантарать»

**Ыйтусене министр хуравлать**

***Пĕтĕмĕшле вĕренӳ модернизацийĕн комплекслă мерисене пурнăçласа пирĕн районта пĕлтĕр шкулсенче юсав ĕçĕсем пурнăçлама, вĕсене пурлăх енчен пуянлатма май пулчĕ. Çакăн валли федераци бюджетĕнчен 8400,7 пин тенкĕ, вырăнти бюджетран 1829,10 пин тенкĕ уйăрнă. Федераци бюджетĕнчен уйăрса панă укçа-тенкĕрен 1373,6 пин тенкĕлĕх шкулсене çĕнĕ спорт оборудованипе тивĕçтернĕ. Укçа-тенкĕпе туллин усă курнă.***

***Модернизаци программипе килĕшӳллĕн районти шкулсене вĕрентӳпе производство оборудованийĕ 953,7 пин тенкĕлĕх, компьютер оборудованийĕ 6693,6 пин тенкĕлĕх, медицина пулăшăвне йĕркелемелли оборудовани 505,2 пин тенкĕлĕх, ачасене турттарма 5 единица çĕнĕ транспорт хатĕрĕ 5590,0 пин тенкĕлĕх, тĕрлĕ литература 2211,8 пин тенкĕлĕх килнĕ.***

***Муркашри вăтам шкула пирĕн районти сывлăх тĕлĕшпе хевтесĕр ачасем çӳремелли база шкулĕ тесе çирĕплетнĕ. Çапла вара «Доступная среда» федераллă программăпа килĕшӳллĕн 2 миллион ытла тенкĕ уйăрса панă. Ятарлă пӳлĕмсем йĕркеленĕ, кирлĕ оборудовани вырнаçтарнă.***

***Вĕрентекенсемпе воспитательсен, хушма педагогсен ĕç укçи ӳсрĕ. Акă кăçалхи пĕрремĕш кварталта учительсен вăтам ĕç укçи 15810 тенкĕпе танлашнă, воспитательсен – 14566 тенкĕпе.***

***Кăçал та юсав ĕçĕсем пысăк калăпăшпа иртмелле: 5359,3 пин тенкĕлĕх. 2004 çулта туса кăларнă шкул автобусĕсене çĕнетме палăртаççĕ. 6 шкулти апат блокĕсене юсаса çĕнетме 1508,66 пин тенкĕ уйăрма пăхнă. Кунсăр пуçне Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкула та «Доступная среда» программăпа килĕшӳллĕн федераци бюджетĕнчен 1 миллион та 100 пин тенкĕ, çавăн чухлех республика бюджетĕнчен килмелле.***

*Юлашки çулсенче Чăваш Енре вĕренӳ сферинчи модернизаци пирки нумай калаçаççĕ. Ку таранччен мĕн пурнăçлама май килнĕ, пирĕн шкулсене малашне мĕн кĕтет? Çак тата ытти ыйтусем çине ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир ИВАНОВ хуравлать.*

**– Владимир Николаевич, пĕтĕмĕшле вĕренӳ системине модернизацилеме палăртнă комплекслă мерăсем иккĕмĕш çул пурнăçланаççĕ. Çак вăхăтра мĕн улшăнчĕ?**

– Чăваш Енре вĕренĕве модернизацилесси чи малтанах учительсен ĕç укçине ӳстерессипе тата шкулсене çамрăк специалистсене явăçтарассипе çыхăннă. Ĕç укçине ӳстерни вĕрентӳ шайне хăпартма май паракан тĕп факторсенчен пĕри пулса тăрать. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çак ыйтăва кĕске вăхăтра татса парасси Правительствăшăн пĕлтерĕшлĕ утăмсенчен пĕри пулмаллине каларĕ. Ку енĕпе чылай ĕç пурнăçланă ĕнтĕ. 2012 çулта шкулти педагогсен уйăхри вăтам ĕç укçи 15655 тенкĕпе танлашнă, кăçалхи пĕрремĕш кварталта вăл 17300 тенкĕпе танлашса регионти вăтам ĕç укçи кăтартăвĕ чухлĕ пулнă.

Михаил Игнатьев учительсен ĕç укçине кăна мар, воспитательсен, музыка ĕçченĕсен, логопедсен, физкультура инструкторĕсен ĕç укçине ӳстерме хушу кăларнине те питĕ пысăк хак памалла. Кăçал ку енĕпе ĕçсем малалла пыраççĕ.

**– Педагогсен ĕç укçине ӳстермеллисĕр пуçне модернизаци программине тата мĕн кĕрет?**

– Шкулсенчи пурлăхпа техника базине, вĕрентӳпе лаборатори базине лайăхлатма, пирĕн ачасене вĕренме хăтлă условисем туса пама та сахал мар укçа-тенкĕ тăкакланă. Сăмахран, эпир шкул автобусĕсен паркне пысăклатрăмăр тата вĕсене ГЛОНАСС системипе çыхăнтартăмăр кăна мар, 2002–2003 çулсенче туяннă техникăна çĕнетрĕмĕр. Пур шкула та хальхи вăхăт ыйтакан компьютер оборудованийĕпе тивĕçтернĕ, шкул библиотекисем самаях пуянланчĕç.

Пĕлтĕр вĕренӳ учрежденийĕсене тĕпрен юсама пурĕ 271,1 миллион тенкĕ уйăрнă. Чылай шкулта çивитти, санузелсем юсанă, чӳрече блокĕсене улăштарнă, аварисене хирĕç кĕрешмелли мероприятисем ирттернĕ тата ытти те.

Шкулти апатланăва лайăхлатассипе, хевтесĕр ачасен вĕренĕвне дистанци мелĕпе йĕркелессипе те ĕçсем пыраççĕ.

Паянхи кун вĕренӳ сферинче пулса иртекен ĕçсем пĕтĕмпех вĕрентӳ пахалăхне ӳстерессипе çыхăннă.

**– Ку çулталăка хăш ĕçсене приоритетлисем шутне кĕртнĕ?**

– Ку çул та, пĕлтĕрхи пекех, шкулсене тĕпрен юсаса çĕнетме пысăк сумма пăхса хунă – 144,200 миллион тенкĕ, вĕрентӳ кĕнекисем туянма – 196,960 миллион тенкĕ. Кунсăр пуçне вĕрентӳпе лаборатори, вĕрентӳпе производство, компьютер тата спорт оборудованийĕсем туянма, шкул столовăйĕсем тата шкул автобусĕсем валли оборудовани туянма та укçа-тенкĕ уйăрнă.

Республика тата вырăнти бюджетсенчен çакна валли пĕтĕмпе 591,7 миллион тенкĕ каять.

Çак кунсенче эпир министерствăпа районсем хушшинче килĕшӳсем тăватпăр. Вĕсене тунă чух вара пĕлтĕр районсем ку енĕпе хăйсен тивĕçĕсене мĕнле пахалăхпа тата калăпăшпа пурнăçланине те шута илетпĕр.

**– Владимир Николаевич, самантпа усă курса Сире халăхра сарăлнă «аслă классенче вĕренӳ тӳлевлĕ пулать» тенĕ сăмаха ăнлантарса пама ыйтас килет...**

– 2013 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче çĕнĕ саккун – «Раççей Федерацийĕнчи вĕренӳ çинчен» Федераллă саккун вăя кĕрет. Çак саккунри 5 статьяра çырса кăтартнă тăрăх пур гражданинăн та, вăл хĕр е ар пулнине пăхмасăр, расăна тата ытти паллăсене пăхмасăр вĕренĕвĕн пур шайĕ те (пуçламăш, тĕп тата вăтам, тепĕр майлă каласан 1–4-мĕш, 5–9-мĕш тата 10–11 классенче) тӳлевсĕр пулмалла, çавăнпа та тĕрĕс мар сăмаха ĕненмелле мар – хальхи вăхăтра та, малашне те аслă классенче вĕренӳ тӳлевсĕрех пулать.

**– Тепĕр ыйту – шкулччченхи вĕренӳ пирки. Асăннă çĕнĕ саккунра ашшĕ-амăшĕсем ачи садика çӳренĕшĕн тӳлекен укçа калăпăшне чикĕлемен. Çемье бюджечĕ çинче çак мĕнлерех палăрĕ?**

– Чăнах та паян ашшĕ-амăшĕсем ачана садикра тытса тăма каякан укçан 20 процентĕнчен ытла тӳлемеççĕ. Çак тӳлев сумми паян 500–1200 тенкĕпе танлашать – ăçта мĕнле. Тĕрлĕ муниципалитетра тăкаксем тĕрлĕрен – уйăхра 3–6 пин тенкĕ таран. Çак суммăна педагогсен ĕç укçи те, ачасен апатланăвĕ те, коммуналлă тата ытти услугăсем те кĕреççĕ.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен вара çак 20 процент «чикки» пăрахăçланать. Ашшĕ-амăшĕ тӳлекен укçа калăпăшне çĕнĕлле шутлаççĕ. Унта ача-пăча садне тытса тăнин тăкакĕсене тата педагогсен ĕç укçине кĕртмеççĕ. Çапла майпа ашшĕ-амăшĕсем ачана садикра апатлантарнăшăн, ăна пăхса тăнăшăн çеç тӳлеççĕ.

Кунсăр пуçне компенсаци сыхланса юлать: пĕрремĕш ачашăн – 20 процент, иккĕмĕш ачашăн – 50 процент, виççĕмĕш ачашăн – 70 процент. Ачана садикра тытса тăмалли тăкаксем ӳсеççĕ пулсан вара ашшĕ-амăшĕн тӳлевĕ те ӳсет, кунпа пĕрлех – компенсаци укçи те.

Çемье бюджетĕнчи тăкаксем пысăкланнипе пĕчĕкленни вара – депутатсем татса памалли ыйту. Ачасене садикра тытса тăрассинче ашшĕ-амăшĕн тӳлев калăпăшĕ мĕнле пулмаллине шăпах вĕсем йышăну туса çирĕплетеççĕ.

# Спортсменсене валли çулла çитрĕ



Вун пĕрмĕш çул ĕнтĕ майăн 1-мĕшĕ Муркашсемшĕн Çуркуннепе Ĕç уявĕ кăна мар, спорт уявĕ те. Шăпах çак кун пирĕн районта çуллахи спорт сезонне уçасси ырă йăлара. Çулсеренех иртекен çăмăл атлетика эстафетине хутшăнакансен йышĕ пĕчĕкленменни вара кашни çулах ăмăртăва хутшăнакансене те, ăна сăнакансене те хавхалантарать. Çакна палăртса район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев тата Муркаш райпо канашĕн председателĕ Б. Андреев уява пухăннисене саламласа ĕçре те, спортра та ăнăçусем сунчĕç. Эстафета райпо парнисемпе кубокĕсене çĕнсе илессишĕн иртрĕ, çавна май райпо хаклă парне чылай хатĕрленипе пĕрлех вĕри апатлану та йĕркеленĕ.

Ачасене нумай кĕттерес мар тесе малтанах çемьесене старта тăратрĕç. 10 çулччченхи ачипе пĕрле ашшĕ-амăшĕнчен тăракан командăсем дистанцие ыттисенчен малтан тĕрĕсленĕрен ытларах та хумханчĕç пулĕ. Анчах та финиш нумай кĕттермерĕ: Муркаш ял тăрăхĕнчи Смирновсен çемйи унта пĕрремĕш çитрĕ, вĕсем хыççăн – Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Романовсем, Муркаш ял тăрăхĕнчи Лоцмановсем виççĕмĕш пулчĕç.

Хыççăн пурте ветерансен хастарлăхне пăхса киленчĕç. Чăнах та ветеран тени уйрăмах спортра ватă тенине пĕлтермест. Кунта малти вырăнсене Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Владимир Ивановпа «Моргаушская» МСО-ра вăй хуракан Тамара Миронова çĕнсе илчĕç. МСО ĕçченĕсем çак кун уява йышлăн пухăннăччĕ, ĕçтешĕн çĕнтерĕвĕнче вĕсем хавхалантарнин тӳпи те пулчĕ паллах. Ку ӳсĕмре Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи П. Васильевпа И. Платонов тата Р. Любимовăпа В. Суворова та палăрчĕç.

Ăмăртăва хутшăннă чи аслă çулхи ветеран Юрий Спаскин та ятарлă парнене тивĕçрĕ. Чи кĕçĕн çулхи хутшăнаканăн, Муркаш ял тăрăхĕнчи Ирина Смирновăн вара киле тем пысăкăш çăмăл тетте йăтса кайма «тиврĕ».

Аслăрах ӳсĕмри ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсен эстафети те хаваслă иртрĕ. Хорнуй ял тăрăхĕнчи Васильевсен çемйи хăвăртлăхпа палăрчĕ. Иккĕмĕш вырăна Çатракасси ял тăрăхĕнчи Григорьевсем тухрĕç, виççĕмĕш вырăна – Муркашри Беловсем.

Чи массăллă стартсем паллах шкул ачисен пулчĕç. Малтан тĕп шкулсен командисем, хыççăн вăтам шкулсем ăмăртрĕç. Кам кашни кун хатĕрленет, кам хутран-ситрен – кунта пĕтĕмпех палăрчĕ. Ахальтен каламаççĕ ĕнтĕ спортра та ĕçлеслĕх Тур панинчен пысăкрах пĕлтерĕшлĕ тесе. Ярапайкассинчи вăтам шкулти физкультура учителĕ, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ Э. Гордеев палăртнă тăрăх вара ачасен кун йĕрки мĕнле пулни те, вĕсен апатланăвĕ пахалăхлă пулни те питĕ пĕлтерĕшлĕ. «Эпир акă ку эстафетăра иккĕмĕш вырăн йышăнма пултартăмăр. Анчах та командăна паян хĕр ачасем туртса кăларчĕç тесен те йăнăш пулмасть», – пĕлтерчĕ пысăк опытлă тренер. Малти вырăна вара Калайкассинчи вăтам шкулăн команди тухрĕ. Кубока виççĕмĕш çул çĕнсе илнĕрен вĕсем ăна яланлăхах хăварма пултарчĕç. Вăтам шкулсенчен виççĕмĕш вырăна Çатракассисем тухрĕç.

Тĕп шкулсен командисенчен Шетмĕпуççем мала тухнипе вара нумайăшĕ кăмăллă пулчĕ. Вĕсем те кубока хăйсенче яланлăха хăварма пултарчĕç. Физкультура учителĕ С. Степанов ăмăрту умĕнхи эрнесенче пуша ра пула тренировкăсем ирттерме май килменнине палăртнипе пĕрлех ачасем маттурине те пĕлтерчĕ. Ку ушкăнра иккĕмĕш вырăна Сосновкăсем, виççĕмĕш вырăна Кашмашсем тухрĕç.

Ĕç коллективĕсем вара, шел пулин те, эстафетăна нумаййăн хутшăнмарĕç. Апла пулин те вĕсем хушшинче те тупăшу хĕрӳ иртрĕ. «Свобода» хуçалăхăн команди мала тухрĕ, шалти ĕçсен пайĕн районти уйрăмĕ – иккĕмĕш, «Сывлăх» ФСК команди – виççĕмĕш.

Ку эстафета хаваслă та интереслĕ иртрĕ, малта вара çуллахи сезонăн чылай ăмăртăвĕ кĕтет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: Шетмĕпуççем кубока хăйсенче хăварма пултарчĕç; Муркаш ял тăрăхĕнчи çемьесем питĕ маттур.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



# Нумай ачаллă çемьесемшĕн тăрăшса

**Ыйтусене министр хуравлать**

***Демографи лару-тăравĕ кун йĕркинче çивĕч тăракан ыйтусенчен пĕри. Çакна ăнланса тата ăна республикăмăршăн хамăра майлă татса парас тесе Чăваш Енре пĕлтерĕшлĕ ĕçсем туса ирттереççĕ. Акă Чăваш Республикинче икĕ çул ĕнтĕ нумай ачаллă çемьесемшĕн тăрăшса виçĕ е ытларах ачаллă çемьесем валли пурăнмалли уйрăм çурт-йĕр çавăрма, дача тума тата килти хушма хуçалăха йĕркелесе ертсе пыма çĕр уйăрса парас саккун ĕçлет. Унпа килĕшӳллĕн асăннă çĕр лаптăкĕсене граждансене харпăрлăха тӳлевсĕр параççĕ. Асăннă саккун республикăра епле ĕçлени пирки пирĕн корреспондента Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ С. ЕНИЛИНА каласа парать.***

**– Светлана Александровна, калаçăвăмăр пуçламăшĕнче вулакансене нумай ачаллă хăш çемьен тӳлевсĕр çĕр участокĕ илме ирĕк пурри пирки аса илтерĕр-ха?**

– Эсир хускатнă ыйту обществăра тарăн тымарланчĕ темелле. Чăваш Республикин 2011 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче йышăннă саккунпа 18 çулччenхи виçĕ е ытларах ачаллă çемьесем тӳлевсĕр çĕр участокĕсем илейреççĕ. Асăннă саккунпа Чăваш Республикинче Раççей гражданствиллĕ пĕрле пурăнакан ашшĕ-амăшĕсемсĕр пуçне вĕсенчен пĕри çеç пулсан та, усрама илнĕ ачаллă çемьесем те, опекунсем те усă курайраççĕ.

**– Асăннă саккун пирĕн республикăри нумай ачаллă миçе çемьене пырса тивет-ши?**

– Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви пĕлтернĕ тăрăх республикăра нумай ачаллă çемьесем 8 пин ытла. Вĕсенчен 3 пин ытла çемьене вырăнсенчи хăй тытăмлăх управленийĕн органĕсем асăннă саккунпа çĕр илме учета тăратнă та ĕнтĕ. Паянхи куна вĕсен хисепĕ Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар, Канаш хулисенче, Шупашкарпа Çĕрпӳ, Вăрнарпа Комсомольски районĕсенче ытларах. Муркаш районне илсен çĕр илме учета тăратнă нумай ачаллă çемьесен хисепĕ – 59 çемье. Вĕсенчен 23-шĕ хăйсен ыйтăвĕсене тивĕçтерекен сертификатсене алла илнĕ те ĕнтĕ. Нумай ачаллă çемьесене уйăрса пама 57 çĕр участокĕ йĕркеленĕ.

**– Иртнĕ вăхăтра пурĕ миçе çемье саккунпа килĕшӳллĕн хăйсем ыйтакан «соткăсен» хуçисем пулса тăнине пĕлес килет.**

– Патшалăх паракан «соткăсене» паянхи куна нумай ачаллă 1144 çемье хăйсен харпăрлăхне куçарчĕ. Вĕсенчен 643-шĕ – пурăнмалли уйрăм çурт-йĕр тума; 456-шĕ – килти хушма хуçалăха йĕркелесе тытса пурăнма; 45-шĕ – дача строительстви валли.

**– Нумай ачаллă çемье çĕрпе тивĕçтермелли учета тăрса асăннă «соткăсен» хуçи пулса тăриччен вăхăт самаях иртме пултарать. Çак хушăра аслă ачи 18 çул тултарчĕ пулсан вăл çемьене çĕрпе тивĕçтерекенсен йышĕнчен кăлармĕç-и?**

– Çук. Саккунпа килĕшӳллĕн учета тăратнă хыççăн 18 çул тултарни черетрен кăлармаллине пĕлтермест.

**– Район администрацийĕ сĕнекен çĕр участокĕпе килĕшмесĕр тăма юрать-и тата?**

– Паллах. Нумай ачаллă çемьене вăл е ку çĕр участокĕ хăш-пĕр енпе тивĕçтермест пулсан, çемье сĕннĕ участокпа килĕшмесен те пултарать. Çĕр участокĕ тĕлĕшпе харпăрлăх правине регистрацилесен те унпа килĕшменнине пĕлтерме пулать. Çакна валли ыйтса çырмалла çеç. Кунашкал чух çемьене çĕр ыйтакансен списокне çĕнĕрен тăратаççĕ. Сĕннĕ вăл е ку çĕр лаптăкĕпе виçĕ хутчен килĕшмесен çемьене черетрен кăлараççĕ. Унăн вара заявлени парас йĕркене çĕнĕрен пуçăнма тивет.

**– Пуш уйăхĕн вĕçĕнче пирĕн республикăна РФ Президенчĕн Атăл çи федераллă округри Тулли полномочиллĕ представителĕн ĕç ушкăнĕ килсе кайрĕ. Унăн кун йĕркинчи ыйтăвĕсен шутĕнче виçĕ е ытларах ачаллă çемьесене çĕр участокĕсемпе тивĕçтересси те пулчĕ. Мĕнле хак пачĕ-ха комисси республикăри ĕçе?**

– РФ Президенчĕн Атăл çи федераллă округри Тулли полномочиллĕ представителĕн ĕç ушкăнĕ ĕçлĕ визитпа пирĕн республикăра пуш уйăхĕн 29-мĕшĕнче пулчĕ. Нумай ачаллă çемьесене çĕр участокĕсемпе тивĕçтересси епле пынипе паллашма вĕсем Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ районĕсене çитсе килчĕç. Комисси вырăнсенче саккунпа килĕшӳллĕн ĕçлесе пынине палăртрĕ.

**А. ПЕТРОВ калаçнă.**

**Район судĕнчен**

# Çĕнĕ миравай судьясем ĕçе кӳлĕнчĕç

Иртнĕ уйăхăн вĕçĕнче район судĕнче пысăк йыш черетлĕ ларăва пухăнчĕ. Унăн ĕçне асăннă органăн председателĕ Э. Тарасова ертсе пычĕ.

– Пирĕн тивĕç – объективлă тата тӳрĕ чунлă пуласси, право нормисемпе усă курассин практикине тарăн пĕлесси. Çакăнпа вара çын шăпи тӳрремĕнех çыхăннă. Çĕнĕ тивĕçе пурнăçлама пуçлакан ĕçченсем те çакна тĕпе хурса тăрăшасса шанса тăратăп, – терĕ Эльза Леонидовна ларăва пуçланă май.

Ларăва Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Ванеркин тăсрĕ. Апрелĕн 23-мĕшĕнче республикăра Патшалăх Канашĕн черетлĕ сессийĕ иртнĕ, унта 20 ыйту пăхса тухнă, вăл шутра миравай судьясене пырса тивекеннине те. Çапла вара ятарлă хушупа килĕшӳллĕн Муркаш районĕнчи 1-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи пулма Андрей Сергеевич Николаева шаннă, 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи – Анастасия Николаевна Ярусова. Вĕсене çак должноçа виçĕ çуллăх çирĕплетнĕ. Çакăн пирки Николай Григорьевич ятарлă хушăва вуласа пачĕ, çĕнĕ ĕçченсемпе паллаштарчĕ. Вĕсене пысăк тивĕçе тулли вăй-хăватпа пурнăçлама ăнăçу сунчĕ.

– Эпир Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн положенийĕсене, суд системин законодательствине, Раççей Федерацийĕн статусне, пĕтĕм тĕнчери право принципĕсене тĕпе хурса ĕçлесе пыма шантаратпăр, – тесе тупа турĕç А. Николаев тата А. Ярусова пухăннисем умĕнче.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев суд ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă хыççăн хăйĕн шухăш-кăмăлне палăртрĕ.

– Никама пăхăнман компетентлă суд ĕçĕсене вăхăтра тата тĕрĕс пăхса тухса тивĕçлĕ йышăну тăвасси, кашни çыннăн правине тĕрĕс тивĕçтересси яланхи пекех тĕпре пулмалла, – терĕ Ростислав Николаевич.

Çавăн пекех саккунлăх хуралĕнче тăракан ытти ĕçченсем тухса каларĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Ыйтусене министр хуравлать**

# И. ИСАЕВ: «Экологишĕн кашниех яваплă»

***Ака уйăхĕнче Чăваш Республикин çут çанталăк министерствин коллегийĕн ларăвĕнче вăрманçăсем 2012 çулхи ĕçсене тишкерсе хак пачĕç, умри тĕллевсене палăртрĕç. Вĕсем пирки хаçат вулакансене ЧР çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министрĕ Иван ИСАЕВ каласа пама кăмăл турĕ.***

**– Иван Васильевич, черетлĕ çулталăк пуçланнă май паян вăрманçăсен иртнĕ çулхи ĕç ӳсĕмĕсенчен хăшне уйăрсарах хăварнă пулăттăр?**

– Вăрмансене сыхласа хăварасси тата çĕнĕрен лартса ӳстересси – Чăваш Республикинчи вăрманçăсен тĕп тĕллевĕ. Ку енпе республикăра иртнĕ çул пысăк калăпăшлă ĕçсем туса ирттертĕмĕр. Вăрман вăл пĕрлехи пуянлăх пулнине эпир самантлăха та манмастпăр. 2010 çулхи шăрăх çу кунĕсенчи пушарсем хыççăн кĕлленнĕ е самай сиенленнĕ вăрмансен лаптăкĕ 6658 гектарпа танлашрĕ. Вĕсен 3740 гектарне тасатрăмăр, 1277 гектарĕ çинче çĕнĕ вăрман лартса хăвартăмăр. Хамăр ума эпир çунăк вăрмансене тасатассипе пуçăннă ĕççене кăçал вĕçлеме тĕллев лартрăмăр. 2016 çулта вăл вырăнсене çамрăк вăрман лартса пĕтерме пăхатпăр.

Юлашки 20 çул хушшинче республикăра вăрман йĕркелĕвĕпе çителĕклех ĕçлесе каяйманран кăçал ку енпе массăллă ĕççене кӳлĕнетпĕр. Сăнавлă, Сĕнтĕрвăрри тата Шупашкар вăрман хуçалăхĕсенче вăрман йĕркелĕвĕ кăçал пĕтĕмпе 90,26 пин гектара пырса тивĕ.

**– Вăрмансене пушартан сыхласси чи пĕлтерĕшлĕ ыйту пулса тăчĕ. Çапла мар-и?**

– Тĕрĕсех. Çакна ăнланса эпир пысăк калăпăшлă ĕçсем туса ирттеретпĕр те. Ăна пулах иртнĕ çулла Шупашкар вăрман хуçалăхĕнче тухнă пушара вăхăтра сӳнтерсе пысăк тăкаксенчен хăтăлса юлма май килчĕ.

Пĕлтĕр федераллă бюджетран Чăваш Республикин вăрман хуçалăхĕ валли пушар хăрушсăрлăхне ӳстерме 26,5 миллион тенкĕ уйăрни пире пушарпа кĕрешме çĕнĕрен 16 техника единици – 6 автоцистернăпа 10 трактор – туянма май пачĕ. Йĕркелӳпе техника мероприятийĕсене кăçалхи çу кунĕсене хатĕрленсе те çителĕклех пурнăçларăмăр.

**– Муркаш районĕнчи лару-тăру пирки пĕтĕмĕшле мĕн калайратăр?**

– Сирĕн енре вăрман хуçалăхĕ çине яваплă пăхасси ăруран ăрăва куçса пыракан ырă йăла. Вăрмансене саккуна пăсса касасран сыхланипе пĕрлех вырăнти пушар хуралĕпе тачă çыхăнура пулни халăх хушшинче пушар хăрушсăрлăхĕпе анлă ĕçлеме çул уçса парать. Район хаçачĕ те кунта пире майлă позици йышăнни пĕтĕмĕшле лару-тăрăва çирĕп те шанчăклă алăра тытма пулăшать. Çак ответлă ĕçе вăхăтра тата тивĕçлĕ пахалăхпа туса ирттерни вăрмансем çине паян килене пăхтарать.

Иртнĕ çулсенчи йывăр вăхăтра Ильинка лесничествинчи вăрман хуçалăхне çĕнетсе йĕркелессинче вăл вăхăтра кунта лесничи пулнă Анатолий Яковлевăн тӳпи пысăк. Шăпах вăл ертсе пынă çулсенче лесничествăн базине тĕрекленсе çитрĕ, унăн производство хăвачĕ курăмлă ӳсрĕ. Паянхи лесничи Анатолий Касьянов та лесничество ĕçне тивĕçлĕ шайра тытса пырать, халăхпа ăнлантару ĕçĕсем анлă ирттерет. Çавăнпах Муркаш енре вăрман лартасси те çулленех ыттисемшĕн тĕслĕх шутĕнче. Сирĕн тăрăхри кашни вăрманçă тăван тавралăха пуянлатассипе тата ăна илем кӳрессипе епле ĕçлени паян йăлтах куç умĕнче. Хĕрĕх çул каяллахи сивĕсем юманлăхсене пысăк сăтăр турĕç те юманлăхсем ларттарса чĕртессипе А. Селюшкин, В. Анисов, Н. Пантелеймонов вăрманçăсем таврари ялсенче ырă ят хăварчĕç. Хыççăнхи çулсенче вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕ тата паян та тимлекен Г. Флегонтов, В. Николаев, С. Николаев, И. Игнатьев, В. Голубев, В. Колбасов, М. Моисеев, Л. Николаев вăрман хуçалăхĕн чысĕ пулса тăчĕç.

Пурнăç уттипе тан пырса иртнĕ çулсенче пысăкланнă Ильинка лесничестви паян 10300 ытла гектар çинчи вăрмансене пĕрлештерсе тăрать.

**– Иртнĕ çул çут çанталăк ресурсĕсемпе тухăçлă усă курассипе еплерех ĕçлерĕр?**

– Вăрмансене пĕтĕмпе 2 миллион та 400 кубла метрлăх каснă. Ку вăл унчченхи çулхинчен 1,6 хут нумайрах. Патшалăх фончĕпе усă курма ирĕк панипе иртнĕ çул Çут çанталăк министерстви 7 аукцион ирттерчĕ. Вĕсен пĕтĕмлетĕвĕпе республика бюджетне 41 миллион та 900 пин тенкĕ чухлĕ пуянлатрăмăр.

**– 2013 çул – Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк. Ку енпе республикăра мĕнле ĕçсем пурнăçлама пăхатăр?**

– Кăçалхи ĕçсем тĕлĕшпе çирĕплетнĕ ĕç планĕпе килĕшӳллĕн республикăра «Йывăç ларт та ăна упра» Йывăç кунĕ, Пĕтĕм Раççейри çут çанталăк сыхлавĕн пушар хăрушсăрлăх акцийĕ, тăван тавралăха сыхлассипе çавра сĕтелсем, «Чи лайăх эколог» конкурс ирттерессине пăхса хăварнă. Унта шкул ачисене, ĕç коллективĕсене анлă явăçтарасси – пирĕн тĕллев.

**А. БЕЛОВ ыйтса пĕлнĕ.**

# Пултарулăхпа паллаштарчĕç

**Культура хыпарĕ**



Муркашри Культура çуртĕнче апрелĕн 17 – 18-мĕшĕсенче Орининти информаципе культура центрĕн кунĕсем иртрĕç. Çакă пуриншĕн те пысăк уяв пулчĕ. Программăра Тури чăвашсен музейĕн, «Надежда» психологи центрĕн, «Сывлăх» ФСК ĕçĕ-хĕлĕпе паллашасси тата вĕсен пулăшăвĕпе усă курасси пулчĕ. Çак самант «Орин ен» ветерансен хор коллективĕшĕн чылайччен асра юлĕ. Ĕçе çапла майпа йĕркелени пур енлĕ усăллă.

Чăваш спектакльне кăмăлламан çын çук та пулĕ. Çавна шута илсе Оринин халăх театрĕн артисчĕсем «Тĕпсĕр сăпкари ача сасси» спектакльпе куракан умне тухрĕç.

Анлă программăна халăх ятне тивĕçнĕ икĕ коллектив тата «Пучах» фольклор ушкăнĕ тăсрĕ. Уява вара Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Волков пĕтĕмлетрĕ. Çавăн пекех ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕн ертӳçи В. Вязов тата район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ В. Ананьев пирĕн ĕçе хакларĕç, малашне те ăнăçусем тума сунчĕç.

Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Альбина Юрату поэт каланă сăмахсем вара чуна хускатрĕç.

– Оринин тăрăхĕнче чăнах та пур енлĕ маттур çынсем пурăнаççĕ. Çакна вара «Шуракăш» юрăпа ташă ансамблĕ тĕнче шайне тухма пултарни те çирĕплетет. Эсир – чăвашлăх управçисем, эсир – тĕслĕхе илмелли ăстасем, эсир ырă сăмаха кăна тивĕç, – терĕ вăл асăннă ушкăн артисчĕсене Турци Президенчĕн Тав çырăвĕсене парса чысланă май.

**Г. ИВАНОВА.**

Оринин сали.

# Калча-хунав туянма пĕлетпĕр-и?

**Сад-пахчара**

Сад-пахчара калча-хунав лартас тапхăр çитрĕ. Анчах та çак материала тĕрĕс суйласа илме пĕлетпĕр-и-ха эпир? Суту-илӳ точкисем вара туянакана тĕрлĕ пахалăхлă хунав сĕнме пултараççĕ. Чылай чухне кăнтăрти регионсенчен кӳрсе килнисем сутлăхра тĕл пулаççĕ. Паллă ĕнтĕ, вĕсем пирĕн тăрăх валли мар, кунти хĕл тапхăрне чăтаймаççĕ вĕсем, çавна май ӳссе аталанаймасăрах пĕтеççĕ. Апла пулсан калча-хунав суйланă чухне илемне кăна пăхса туянмалла мар, вĕсем пирĕн климатшăн юрăхлă пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çапла вара пасартан, суту-илӳ точкисенчен калча-хунав туяннă чухне чи малтанах сорт тата пахалăх сертификатне ыйтмалла. Асăннă документ çинче культура ячĕ, сорчĕ, категорийĕ тата ытти информаци пулмалла. Енчен те лартмалли материала Раççейĕн ытти регионĕнчен кӳрсе килнĕ пулсан сутуçăран карантин сертификатне ыйтмалла. Унсăрăн хунавпа пĕрле тĕрлĕ чир-чĕр, сăтăрçă ерсе килме пултарать. Тĕслĕхрен, улма-çырла продукцийĕ çинче калифорни щитовки, тымарĕпе тăпри çумĕнче çĕр улмин ылтăн нематоди пулма пултарать. Уйрăмах вара çимĕçшĕн бактери чирĕ (бактериальный ожог) сиенлĕ. Паянхи кун тĕлне çак чир Карачаево-Черкеси, Тамбов, Белгород, Воронеж, Саратов облаçĕсенче анлă сарăлнă. Инфекци пуçаруçи 170 тĕрлĕ улма-çырла йывăç-тĕммине сиенлетет, вĕсем çинче хĕл каçать, сыввисем патне çăмăллăнах куçать. Чир чи малтан чечек тата пĕчĕк суран витĕр, кайран вара талккишпех сарăлать.

Чирлĕ йывăçăн чечекĕсем, папакĕсем шанаççĕ, хăмăр тĕспе витĕнеççĕ. Сиенленнĕ туратсем çинче тумламсем курăнаççĕ, каярах вĕсем юхма пуçлаççĕ. Çулçăсем хуралаççĕ, пĕтĕрĕнеççĕ, анчах та турат çинчен ӳкмеççĕ. Çимĕçсем те хуралса типсе лараççĕ, çапах та татăлмаççĕ. Нӳрĕк те ăшă çанталăкра сиенленнĕ вырăнсенчен шурă тĕслĕ шĕвек сăрхăнать. Çапла вара чирлĕ йывăç вут-çулăмпа çуннă хыççăнхи евĕр курăнать. Ку чир хунавран, йывăç каснă чухне усă курнă инструментран, çавăн пекех хурт-кăпшанкă урлă куçать.

Çавăнпа та сад-пахча ăстисене асăрхануллă пулма ыйтас килет, енчен те йывăç-тĕм çинче паллă мар чир-чĕр асăрхасан Раççейри ял хуçалăх надзорĕн Чăваш Республикинчи управленине пырса е 52-80-29 номерпе шăнкăравласа пĕлме пултаратăр.

**Н. СПЕСИВЦЕВА,**
**Раççейри ял хуçалăх надзорĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн патшалăх аслă инспекторĕ.**

## Объявления

АУ СПО «Новочебоксарский политехнический техникум» Минобразования Чувашии объявляет набор обучающихся на 2013–2014 учебный год по следующим специальностям:

По программе начального профессионального образования на базе 9 классов со сроком обучения 2 г. 5 мес. с получением полного (общего) образования; на базе 11-ых классов – 10 месяцев ПРОФЕССИИ: сварщик, автомеханик, парикмахер, мастер общестроительных работ.

По программе среднего профессионального образования на базе 9 классов со сроком обучения 3 г. 10 мес.; на базе 11 классов – 2 г. 10 мес. СПЕЦИАЛЬНОСТИ: сварочное производство (очная), парикмахерское искусство (заочная).

Нуждающимся в жилье будет предоставлено место в общежитии. По вопросам поступления в техникум можно обратиться по тел.: 73-87-30. Всю интересующую информацию можно получить на сайте техникума info@npth.ru. Адрес техникума: г. Новочебоксарск, ул. Советская д. 3. 1-2.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-10.

Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FuLL HD. Триколор – 7300 руб.+подарок. Телекарта – 3000 руб. Тел.: 8-906-385-29-30. 8-10.

Теплицы из поликарбоната от производителя.
Тел.: 8-937-384-21-45, 8-927-842-41-15. 1-5.

Итоги проведения публичного слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» на территории Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

29 апреля 2013 года прошли публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

На указанном выше публичном слушании было принято следующее решение: 1.Одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

Об изменении разрешенного использования земельного участка

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:092701:1100 из категории «земли промышленности, энергетики, транспорта, связи, радиовещания, телевидения, информатики, земли для обеспечения космической деятельности, земли обороны, безопасности и земли иного специального назначения», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, с «для строительства автозаправочной станции» на «для реконструкции автомобильной дороги М-7 «Волга».

* * *

